ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН НАЛУКСЕМПЕ ТӲЛЕВСЕМ ҪИНЧЕН КАЛАКАН САККУНЁСЕМПЕ РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН СУБЪЕКЧЁСЕНЕ ШАНСА ПАНĂ НАЛУК ЙЁРКЕЛЁВЁН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЫЙТĂВЁСЕМ ҪИНЧЕН" САККУНЁН 23 ТАТА 39.1 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ҪИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Раҫҫей Федерацийён налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раҫҫей Федерацийён субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" 2001 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 38 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2001, 42, 45 №-сем; 2002, 46, 49, 52 №-сем; 2003, 54, 57 №-сем; 2004, 59, 61 №-сем; 2005, 64, 65 №-сем; 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 87 №; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 96 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем; 2014, 9, 11 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 6, 11 №-сем; 2017, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 7-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ;

2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 23 статьяна çакăн пек çырса 1.7-мĕш пункт хушса хурас:

"1.7. Енчен те организацисен пурлăхĕнчен илекен, Куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрне кĕртнĕ тата 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усă куракан кадастр хакне кура налук хумалли куçман пурлăхăн объекчĕсем тĕлĕшпе шутласа палăртнă налук сумми çав налук хумалли объектăн Куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрне кĕртнĕ тата 2023 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усă куракан кадастр хакне кура 1,4 коэффициента шута илсе шутласа палăртнă налук суммин-чен пысăкрах пулсан, 2024 çулхи налук тапхăрĕнче организацисен пурлă-хĕнчен илекен налук суммине çав налук хумалли объектăн Куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрне кĕртнĕ тата 2023 çулхи кăрлач уйă-хĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усă куракан кадастр хакне кура 1,4 коэффициента шута илсе шутласа палăртнă налук суммин виçипе тан тӳлемелле, куçман пурлăхăн тивĕçлĕ объекчĕсен кадастр хакĕ вĕсен характеристикисене улăштарнине пула ӳснĕ тĕслĕхсемсĕр пуçне.

2023 çулта куçман пурлăх объекчĕсем тĕлĕшпе харпăрлăх прави (хуçалăх тытса пырас прави) пуçланнă чухне çак пунктăн пĕрремĕш абзацĕн положенийĕсемпе усă курас тĕллевпе 2023 çулхи налук тапхăрĕшĕн орга-низацисен пурлăхĕнчен илекен налука, асăннă куçман пурлăх объекчĕсем тĕлĕшпе харпăрлăх прави (хуçалăх тытса пырас прави) пуçланнă тапхăра шута илмесĕр, Куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрне кĕртнĕ тата 2023 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усă куракан кадастр хакне кура шутласа палăртаççĕ.

Çак пунктăн положенийĕсемпе организацисен пурлăхĕнчен илекен налука шутласа палăртма çакăн чухне усă кураççĕ:

енчен те организаци 2023 çулта куçман пурлăх объекчĕсем тĕлĕшпе налук никĕсне Куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрне кĕртнĕ тата налук тапхăрĕн çулĕн кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усă куракан кадастр хакĕ евĕр палăртнă пулсан;

Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 382 статйин 5-мĕш пункчĕн положенийĕсене шута илмесĕр.";

2) 39.1 статьяра:

а) 1-мĕш пунктăн пĕрремĕш абзацĕнче "çак статьян 1.1-мĕш, 1.3-мĕш тата 1.4-мĕш пункчĕсенче" сăмахсене "çак статьян 1.3–1.5-мĕш пункчĕсенче" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 1.1-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

б) çакăн пек çырса 1.5-мĕш пункт хушса хурас:

"1.5. Социаллă предприяти тесе йышăннă, вĕсен социаллă предприяти статусĕ пурри çинчен калакан сведенисене Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вак тата вăтам предпринимательлĕхе аталантарасси çинчен" 2007 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 209-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн вак тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсен пĕрлехи реестрне кĕртнĕ налук тӳлекенсен категорийĕсем валли налук хумалли çăмăллатнă тытăмпа усă курнă май илекен налук ставкине çакăн пек палăртаççĕ:

енчен те налук хумалли объекта тăкаксен виçи чухлĕ чакарнă тупăшсем пек шутлаççĕ пулсан 10 процент чухлĕ;

енчен те налук хумалли объекта тупăшсем пек шутлаççĕ пулсан 4 процент чухлĕ.

Çак пунктра асăннă налук ставкисене 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2026 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи тапхăр валли палăртса хураççĕ.".

2 статья

1. Çак Саккун, çак Саккунăн 1 статйин 1-мĕш пункчĕсĕр пуçне, 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, анчах та ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа пĕр уйăх иртиччен маларах мар тата тивĕçлĕ налук енĕпе черетлĕ налук тапхăрĕн пĕрремĕш числинчен маларах мар вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 1-мĕш пункчĕ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа пĕр уйăх иртсен вăя кĕрет тата 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи сĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕ
41 №